РАССЕЙ ХВЕТЕРАТВИЙЕН СОТ[illegible]ИСАМПА КАНАШ РЕСПУПЛИККИ.

*Пĕтĕм тĕнтери пролеттарисем, пĕрлешĕр!*

К. В. Иванов.

# НАРСПИ

5 пайлă ҫăвашла трамă.

(Нарспи, чувашская драма в 5 действиях).

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ.

Тĕп Ҫăваш пайĕ кăларнă.

ИЗДАТЕЛЬСТВО
Центрального Чувашского Отдела при Народном Комиссариате по национальным делам.
Хусан—1921 ҫул.

## К. В. Иванова асăнса.

Васлей ывăлĕ-Константин,—
Чăваш ачи, вĕри чун!
Сан илемлĕ йурусем
Тин сарăлнă чечек пек.
Сивĕ çилĕ вĕрнипе
Ырă чечек хуçăлчĕ.
Кĕтмен вилĕм çитнипе,
Санăн куçу хупăнчĕ!
Сан илемлĕ сăввусем
Шăрантарнă ыттăн пек,
Хухĕм чăваш чĕлхипе
Йанăртасçĕ шăпчăк пек.
Вуланă чух йĕртеççĕ,
Чĕре тĕпне витеççĕ;
Пĕрре илтсен чăваша
Мăн шухăша йараççĕ.
Епир сана асăнса
Нарспи халне сисетпĕр,
Театтăрта вылъаса
Сетнер каччă шеллетпĕр.

Р. В. Ц. 5000 эк. Казань 3-я Государствен. типография.

## ВЫЉАКАНСЕМ.

Михетер—пуйан ђăваш 50 çулта.
Карђăк—упăп арăмĕ 55 çулта.
Нарспи—вĕсен хĕрĕ 19 çулта.
Сетнер—Нарспин савнă кађђи 20 çулта.
Сетнерĕн амăшĕ—55 çулта.
Тăхтаман—Нарспин ват упăшки 45 çулта.
Йевђĕ.
Туй арăмĕсем.
Хĕр çуммисем.
Хăйматлăх.
Мăн кĕрӳ.
Кĕçĕн кĕрӳ.
Йуманкка.
Тимĕркке.
Вăйăçĕ.
Хăнасем, куракансем.
Арăм.
Сентти. (7 çулхи ађа).
Вăрăсем, çынсем.

# Нарспи.

## Пӗрремӗш пайӗ.

### 1-мӗш сценӑ.

1-мӗш курӑнни.

Пӳрт ҫумӗнҫе урамра Йуманккапа Тимӗркке калаҫса лараҫҫӗ.

**Йуманкка.** Пуш уйӑхӗн вӗҫӗнҫе,
Хӗвел пӑхрӗ ӑшӑтса,
Силпи ҫӑваш йалӗнҫе
Йур ирӗлҫӗ васкаса.
Тусем, сӑртсем хуп-хура
Йурӗ кайса пӗтвӗрен,
Тухаӑ курӑк ҫӑп-ҫӑра
Хӗвел хытӑ хӗртвӗрен.
Сивӗ хайар хӗл иртет,
Кайаӑ йӗрсе, хурланса;
Сив куҫ-ҫуллипе йӗрет
Иртвӗ куншӑн хуйхӑрса.

Путăксемпе, варсемпе
Çĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет
Анҫах мĕнле йĕрсен те,
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет.
Хĕл кус-çулĕ шавласа
Йухса кайрĕ çырмара.
Аҫи-пăҫи выл҄аса
Ҫупса çӳрет урамра.

**Тамĕркке.**

Килҫĕ ырă çуркуппе
Килҫĕ иаҫĕ ăшăтса
Хĕвел саваť тĕнҫене
Хĕл ăйхинҫен вăратса.
Тĕттĕм вăрман ҫĕрĕлет,
Йешĕл тумтир тăхăнаť,
Çеçен хир те йешерет,
Илемĕпе мухтанаť;
Тĕрлĕ-тĕрлĕ ҫеҫексен
Ырă шăрши сарăлаť.
Пур çĕрте те кайăксен
Лайăх йурри йанăраť,
Çӳлте, пĕлĕт айĕнҫе
Тăрри йурри илтĕнет,
Çемçе курăк çийĕнҫе
Путек-сурăх сиккелет.
Хăй кĕтĕвĕ патĕнҫе

Аҫа шăхлиҫĕ калать:
Хырăмĕ пит выҫнипе
Силпи йалнелле пăхать.

**Йуманкка.** Ҫилпи йалĕ пуйан йал,
Ларать вăрман йăшĕнҫе.
Кантур пекех ҫурҫĕсем
Ват йăмрасем айĕнҫе,
Йалĕ тавра укăлҫа,
Ҫĕнĕ ҫатан укăлҫа,
Ҫив капанлă анкарти,
Тĕрлĕ ҫимĕҫлĕ пахҫа;
Аслă урам тăрăшшĕпе
Хăма витнĕ ҫурҫĕсем,
Урам икĕ айăккипе
Йем-йешĕлех саҫĕсем.
Ҫуртсем тавра кил-карти
Ҫул хўме пек ҫавăрнă.
Сарă хапха килсерен
Ҫĕнтĕрленĕ тăрăлă.
Силпи йалĕ аслă йал,
Хула тийĕп инҫетрен.
Пирĕн йалти ҫăвашсен
Мўлсăр-халсăр наҫар мар.

**Тимĕркке.** Ҫăн калатăн кўрĕшĕм
Ҫăтмах пекех туйăнать

Пирĕн Сиятп йалĕнҫе,
Вăхăт иртни сисĕнмест,
Савăнăçлă кунсенҫе.

**Йуманкка.** Çакă çутă тĕнҫере
Вăйли çук та етемрен:
Шывсем çинҫе, çĕр çинҫе
Хуçа пулса вăл тăрать.

Анҫах вăйлă етем те

Хăй тĕнҫине пăхăнать,
Укçапала ерехех
Çынна ăсран кăларать.
Аслă калăм ернинҫе
Мĕнле ҫăваш ĕçмен-ши?
Тарăн нÿхреп ăшĕнҫе
Мĕн ҫул сăра пĕтмен-ши?
Ĕçе, ĕçе каçалла
Ÿсĕр ҫăваш ыванать,
Çуркуннехи пыльҫăк та
Канма çемçе туйăнать.
Ерех тесен ĕç çынни
Нихăшĕ те тиркемест.
Вăхăҫĕпе ĕçлĕпĕр,
Вăхăҫĕпе ĕçĕпĕр.

2-мĕш курăнни.

(Нарспи кĕвентепе шыв ăсма иртсе)

**Нарспи** Сывă-и-ха пиҫҫесем?
Пуш витрепех тĕл пултăм,
Ан йатлăрах айвана,
Ҫăл-шыв ăсма кайаттăм.

**Тимĕркке** Сыв-ха Нарспи йăмăкăм.
Пуш витререн хăрама,
Епир акма тухман-ха:
Ахаҫ кăна калаҫса
Лараттăмăр урамра
Шывне ăсма ҫӳре те,
Хăна хурҫка ан тыттăр.

**Нарспи** Хурҫка валли ҫĕп-тавраш
Манран пуҫне те пайтах.
(Кайаť).

3-мĕш курăнни.

**Йуманкка** Йешĕл курăк хушшинҫе
Сап-сар ҫеҫек ӳсет-ҫке
Аслă Силпи йалĕнҫе
Ҫакă Нарспи ӳсет-ҫке.
Пиҫĕ-куҫĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă ҫеҫек пек.

Икĕ куçĕ хуп-хура,
Икĕ хура шăрçа пек.
Йавăнаççĕ хыçалта
Çивĕҫ вĕçĕ кăтрисем.
Ӳтса, утса пынă ҫух,
Шăнкăртатаç тенкисем.
Куçĕсемпе пăхнă ҫух,
Каҫҫăн ҫӗри çĕкленет.
Çӳхе тути кулнă ҫух,
Каҫҫă ҫунĕ çемçелет.
Хирти сарă ҫеҫеке
Ăшă куçпа кам пăхмĕ?
Ун пек хитре хĕр пулсан
Мĕнле каҫҫă йуратмĕ.
Хĕвел анса ларсанах
Питне çăват, шăлăнат.
Вăййа тухма шĕлкеме
Кăкăрĕ çине çакат,
Шăнкăр—шанкăр теветне
Хул—пуççи урлă йарат,
Хĕрлĕ пурçăн тутăрне
Хĕрле çавăрса çыхат.

Вăйĕсенҫе ун сасси
Кайăк сасси йевĕрлĕ
Ахăлтатса кулнă ҫух,

Ҫирӗп ҫын ку темелле;
Вӑйӑ саланиҫҫенех
Савӑнтарать сассипе.
Ирех тӑрать, тумланать,
Нарспи ӗҫе тытӑнать:
Йе нурҫӑн ҫип илет те,
Йурла, йурла тӗр тӑвать;
Йе ҫӗлеме ларать те,
Ҫӗвви шӑрҫа пек пулать.
Йе пир тӗртме ларать те,
Выҫҫантарать ӑсине;
Йе хултӑрҫа тытать те,
Ҫипне тийет ҫӗррине
Йе сак ҫинҫи кушакӗ
Питне ҫӑва пуҫласан,
Апат хатӗр хӑнашӑн,
Алли-ури ҫӑмӑлран.

**Тимӗркке**

Аван иртрӗ пурӑнӑҫ
Хӗрӗн ҫулӗ тулиҫҫен,
Ашшӗ килне хӑтана
Ҫиҫӗ йутран килиҫҫен.
Анҫах пӑрах калаҫма:
Ашшӗ кунта хӑй килет.
Пӑртак сынна пулмалла,
Пӑрӑнар-ха пӗр йенне.

*(Тухса кайаҫҫӗ).*

## 4-мӗш курӑнни.

**Михетер** (Мухтанса калаҫса уткалать)

Ман хӗр пӗкки камӑн пур?
Кама пӳрнӗ ун пек хӗр?
Пушмак ҫук-и хӗрӗмӗн?
Ҫӳрет-и вӑл тенкӗсӗр?
Силпи йалӗ ӗмӗрне
Ун пек хӗрсем курас ҫук!
Цӗр ҫӑваш та хӑй хӗрне
Михетер пек пӑхас ҫук!
Михетере мӗн ҫитмен?
Мӗнӗм ҫук-ши ҫуртӑмра?
Кӗмӗл тенкӗ, тӗртнӗ цир.
Сахал-ши мӗн ҫӳ ісемре?
Тырӑ—пулӑ туллийех
Ишӗлмест-и кӗлетре?
Ҫу, сӗт-турӑх, сӑра пыл,
Тулли мар-и нӳхрепре?
Маҥа хирӗҫ пуйан та
Пӗтӗм йалта урӑх ҫук.
Манӑн ҫуртӑм хула пек,
Кӗрсен витӗр тухма ҫук.
Хуралтӑмсем тӑррине
Ҫӑх-ҫӗп вӗҫсе касма ҫук.

Картиш тулли йапала
Купаланса вырташшё,
Ўрхамах пек лашамсем
Утă—вёлё çиçессё.
Манăн выдăх-ђёрлёхсем
Пиђёке пек çўресçё.
Тури касра ман кил-çурт
Айакранах курăнат.
Ман пек сумлă пуйана
Мухтанни те килёшет.
Хам хёрёме йуратса
Аслă çăварни хыççăнах
Хутăм ăна çураçса
Тепёр хам пек пуйанах,
Пулас туйа йал йышсём
Тўсеймесёр кётеççё
Икё пуйан пёрлешсен
Шел те пулё пирён туй.

(*Ђаршав*).

## 2-мӗш сцена.

### 5-мӗш курӑнни.

(Ҫӑл-вӑлашки патӗнҫе, ватӑ йӑмра айӗнҫе Нарспи витре тытса тӑрать).

**Нарспи**

Атте мана ҫураҫрӗ.
Хушӑлкари пӗр пуйан
Ватӑ урҫа Тӑхтаман
Мана илме килӗшрӗ.
Манӑн атте килӗнҫе
Парне залли ӗҫлеҫҫӗ,
Туйӑн хӑватне сисеӗ
Вӑйраи тухса ӗҫлеҫҫӗ.

Анҫах пулаҫ ҫак ӗҫпе
Манӑн ҫунӑм савӑнмасть,
Ватӑ каҫҫӑ Тӑхтаман
Ман ҫӗреме вырнаҫмасть.

Йал вӗҫӗнҫе ту касра
Йӗҫӗкҫеҫҫӗ пӳртларать,
Амӑшӗпе ҫав пӳртре
Сетнер аҫа пурӑнать.

Ҫыпер аҫа Сетнерӗн
Пӗр урхамах лаши пур,
Ватӑ карҫӑк амӑш пур.

Вӗри йунлă ҫӗри пур,
Икӗ вăйлă алли пур
Тăшман пуҫне пӗтерме
Вӗри вут пек ҫилли пур.
Унтан урăх Сетнерӗн
Нимӗн те ҫук йапала
(Анҫах асту, ман атте
Хӗрне памасӑ ҫуккалла).
Ҫӳлӗ валак патӗнҫе
Ватă йăмра айӗнҫе
Сетнер йалан ирхине
Урхамах пек лашине
Мана кӗтсе шăварат.
Ах ҫӗрем кăртлатат
Ăшăм питрех вăркат-ҫке
Анҫах Сетнер тӗмӗншӗн
Пайан прех ҫитеймен.

*(Пăхкалат).*

6-мӗш курӑнни.

(Хыҫалта „Тпру!“ тени Сетнер сасси илтӗнет).

**Сетнер.** (Нарспи патне ҫупса пырса)

Ах, ҫупӑм Нарспийӗм,
Ан ҫилен-ха мӗскӗне,
Сана кунта кӗттертӗм,
Хам йулташпа калаҫрӑм
Ҫук-ши манӑн ӑраскалӑм?
Ҫапах сана йут ҫӗре
Илсе кайӗ-шим усал?
Ах, телейӗм ҫук тӑр ҫав,
Аҫу-аҫҫу пит пуйан!
Хӑйсен пуйанлӑхӗпе
Пӑрӑнаҫҫӗ ҫук ҫынран.

**Нарспи.** Ан ӳпкелешсем, Сетнер,
Мӗншӗн ҫынна ӳпкелес?
Ӑҫта тарса кайас-ха
Пуйан атте-аннерен?
Атте-анне ухмах ҫав,
Мӗн каласа кӑнтарас?
Мӗн тӑвар-ха, кала-ха,
Мӗнле пирӗн май тупас?
Хӗвел ансан каҫ пулсан
Пайан туйа лартаҫҫӗ,

Хушăлкари пуйанпа
Манăн туйа пуçлаççĕ.
Тăшман ытла хайар тет,
Йепле унтан хăтăлас?
Сетнер, Сетнер, кала-ха,
Ăçта кайас, мĕн тăвас?
Сана тем пек йуратса,
Савса епĕ пурăнтăм,
Анҫах çапах çак куна
Çамрăк пуçăмпа куртăм.

**Сетнер.**

Пĕртен пĕрех пуçăм пур,
Вĕри йунлă ҫĕрем пур,
Вать карҫăк аннем пур,
Урхамах пек лашам пур.
Вĕсенҫен те хаклăрах
Ҫунăм савни есĕ пур,
Анҫах сана та пайан
Туртса илен тăшман пур,
Вăл тăшмана пĕтерме
Икĕ вăйлă аллăм пур.
Анҫах ăна пĕтерсен
Унтан усал тĕнҫе пур
Хăвăн кăмăлу пулсан,
Лашам çине лартăттăм
Айаккаллах ку йалтан
Вĕçĕттĕм те кайăттăм.

**Нарспи.** Сетнер таврăн хăвăртрах,
Шыва анаТ пĕр арăм...
Ҫун савнипе калаҫса
Уйăрлассăн туймарăм.

**Сетнер.** Сывă пул еппин, Нарспи,
Ан ман еппин мĕскĕне!

*(Кайат).*

**Нарспи.** Сывă пулах, сывă пул!
Йепле сана манăп-ши?
Савпа пĕрле пулмасан,
Йепле йутра пулăп-ши?

7-мĕш курăнни.

(Арăм витрепе пырса).

**Арăм.** Мĕншĕн Нарспи хуйхăран
Каҫҫу ытла ватă-им?
Парнŷ ытла сахал-им?
Йе уйрăлма пит хĕн-им?

(Нарспи шыв ăсаТ те, аллипе сĕлтсе утаТ)

*(Ҫаршав).*

## Иккӗмӗш пайӗ.

### 1-мӗш стсенӑ.

Михетер пӳртӗнҫе.

1-мӗш курӑнпи.

(Карҫӑкӗ мӑкӑртатса йапаласене тирпейлесе ҫӳрет, Михетер туй кӳми тӳрлетет). Нарспи тумланса ларнӑ).

**Михетер**. Мӗн кӗҫӗпрен ӳстертӗм,
Ҫак тарана ҫитертӗм;
Ӗнтӗ пайан йулашки
Ӗҫӗм пултӑр хӗрӗме.
Ӳсрӗ ҫитрӗ, пулҫӗ хӗр—
Пуйан упӑшка кирлӗ,
Упӑшкине тупрӑмӑр—
Кӳми лайӑхрах кирлӗ.
Ҫитрӗ ӗнтӗ Ҫимӗк те,
Хӗрӗн туйне тумалла,
Тантӑшӑмсем пухӑнсан,
Кӗҫӗр туйне лартмалла.

**Нарспи**— Ҫиҫӗ йутран килҫӗ йут
Атте килне хӑтапа.
Сарӑ хӗре ҫураҫат

Ҫиҫĕ йутри пуйана.
Атте-анне ан васкăр
Тата пĕр ҫул тăрăр-ха
Пĕртен пĕрех хĕрĕре
Тата пĕр ҫул усрăр-ха.

**Карҫăк—** Мĕн пуплетĕв ес айван?
Елле аҫу-анҫăҫунтан
Пысăк пулас тетĕн-и?
Ун пек пуйан упăшка
Ĕмĕрне те тупаймăн.
Ху ăсупа ҫӳресен
Ĕмĕр телей кураймăн.

**Михетер—** Ну, карҫăк ҫĕрес тыт,
Сăра йăтса уттарар,
Пирĕн туйа килмешкĕн
Тантăшсене йыхăрар.

(Иккĕшĕ те тухса кайаҫҫĕ сăрапа).

**Нарспи—** Ай-хай хĕн пек ҫĕклесси
Ай-хай ҫăмăл ĕҫесси!

(Стсенă хыҫĕнҫе илтĕнет).

**Михетер сасси—** Ырă тантăш тăвансем,
Пире хисеп тумăр-ши?

**Карҫăк сасси**— Хӗре хаҫҫа паратпăр,
Тури касса утмăрши?

**1—сасă**— Пырăпăрах пырăпăр,
Пымасăрах йулмăпăр!

**2-сасă** Турă пӳрсен сыв пулсан,
Кăмăлăра ҫатмăпăр!

**Нарспи** Атте—анне ӳсӗрпе
Хӗрне итлес темерӗ,
Каҫҫи пуйан тенине
Хӗрин ҫӳнне пӗлмерӗ.—
Ватă ҫун та хытнă ҫуп
Хытса кайнă кӗҫҫе ҫав.
Ҫамрăк ҫун та, пӗҫӗк ҫун,
Ҫунӗ ытла ҫемҫе ҫав.
Кайăк ҫунӗ пулсассăн
Йӗрӗттӗм те кулăттăм
Ҫунатăмсем пулсассăн,
Вӗҫӗттӗм те кайăттăм.

(Нарспи тухса кайаҭ).

2-мӗш курăнни.

**Михетер** (Михетерпе карҫăкӗ хăпасепе йертсе килеҫҫӗ). Иртӗр савнă хăнасем!

**Йевҫи**

Ырӑ тантӑш тӑвансем,
Тури касса уттарар!
Перекетлӗ сӑрана
Йӧҫе ёҫе туй лартар!

Пирӗн тӑван хӗр парать,
Пире кунта йыхӑрать.
Ҳӑйӗн савнӑ хӗрӗшӗн
Урӑм—сурӑм туй пуҫлать.

**Михетер**

Туйне пуҫне пуҫлиҫҫен,
Авал ҫӑваш йӑлипе,
Ваттисене асӑнса
Тӑкӑр ҫӑкӑр тӑварне:

Ват аттесем-аннесем,
Ырӑ курӑр ҫӑтмахра,
Пирӗн ҫӑкӑр-тӑварсем
Пулҫҫӑр сирӗн умӑрта.

Пирӗн савнӑ Нарспине
Парӑр ырӑ пурӑнӑҫ,
Парӑр унӑн телейне
Ыраллӑхна савӑнӑҫ!

**Карҫӑк**

Ҫӗнсе кӳртӗр Нарспине,
Ӑҫта-ха вӑл курӑнмасть?

3-мĕш курăнни.

(Нарспи хурлапса йĕрсе кĕрет, пуçне усса тăрат).

**Михетер** Нарспи, хĕрĕм пил сана!
Упăшкуна ан пăрах,
Аван пурăн уйпала,
Тату пулăр йалапах (ĕ ç е т).

**Карзăк** Итле, хĕрĕм, йăваш пул,
Усал çынпа ан çыхлан
Ĕçле ĕçле, ĕçзен пул,
Кирлĕ марпа ан хытлап! (ĕ ç е т).

(Шăпăр-купăс сасси илтĕнет, туй йурри йурлаççĕ, ĕçеççĕ).

**Йевзĕ** Акă туй та акă туй,
Пирĕн туйсем çаплалла!
Тури касри туй сасси
Йантăратат çур йала.

Михетерĕн кил-çурзĕ
Айакранах курăнат
Урам йензи хапхаран
Çын кĕрет те çын тухат.

Шўрт умĕнҫе ҫын нумай,
Килнĕ вĕсем туй курма
Ырă хуҫа хушнипе
Туй халăхĕ туй тăват.
Мĕншĕн шăппăн ларатăр,
Мĕншĕн шăппăн ларэтăр?
Шăппăн шăппăн лармашкăн
Шăпҫăк ҫĕпни мар епир.

**Туй арăмĕ** Ĕҫетпĕр те ҫиетпĕр
Пехиҫ ҫамрăк сынссне.
Аҫа-пăҫалă пулăҫҫăр,
Ырă тату пурăнҫҫăр.
Хĕрне каҫҫа йуратса
Атăр шеирех туй тăвар!
Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ
Йепле ташлат ват хуҫа

(**Ми**хетер тухса та**ш**лама тытă**нат**).

Хĕрин туйин савăнăҫĕ
Ҫĕклет иккен ват пуҫа.

(Ҫамрăксем те тухса ташлаҫҫĕ).

**Хĕр суммисем**— Ыр аппаҫăм Нарспи пур,
Ăҫта санăн телейу?

Есĕ йута кайсассăн
Мĕн тăвĕ-ши Сетнеру?

**Нарспи**— (Пӳркенҫĕк айĕнҫе йĕрет).
Ах, аттеçем-аннеçем,
Сăпка çинҫи аҫа ҫух
Лăнкăр лăнкăр силлеҥ ҫух
Тăп-тăп тытса савнă ҫух
Пит параслах марҫĕ-çке
Халĕ йепле парăр-ши?

Лапка лапка йур çăвать
Ҫӳреҫе витĕр курăнать.
Епĕ ырă курмасси
Каймасăрах курăнать.

(Туй çыннисем саланаççĕ, хăшĕ уеĕрĕлсе çавăнтах йăванса ӳкеççĕ).

4-мĕш курăнни.

**Хĕрсем**— Атăр хĕрсем тухар-и?
Вăй сăввисем калар-и,
Йулашки каç выҫар-и,
Нарспи аппана ăсатар-и?

*(Тухаççĕ).*

**Нарспи—** Ах савнă тантăшсем!
Йулашки каç выљаса
Йулас арăм пулиђђен.
Йулашки каç Сетнере
Курас йута кайиђђен.

(Сетнер çавăнтах пĕр кĕтесре пăхса пуç-не усса хуйхăрса тăрат)

Ах, Сетнер, ес те кунта килтĕн-и?
Мана ăсатас терĕн-и?
**Сетнер —** Санран епĕ йулиђђен
Хам тăшмана ăсатăп.
Аўа ђунăм Нарспийĕм!
Ўсĕр халăх туйиђђен, —
Лашам хатĕр, ларар та
Вăрманалла вĕçтерер.
**Нарспи—** Аўа еппин тарăпăр!
(Ы талáшса тухаççĕ).

*(Ђаршав).*

## II-мӗш стэенӑ.

Вӑрманта. Сетнерпе Нарспи йывӑç айӗнҫе параççӗ.

5-мӗш курӑнни.

**Сетнер** — Вӗт çӑлтӑрсем тахçанах
Пӗлӗт айне хупланҫӗç.
Вӑрман тӗлне хуп-хурах
Сӗм пӗлӗтсем каплӑнҫӗç.

Çумӑр çӑвать шыв йухать
Хура вӑрман кӗр кӗрлет.
Çил тухать те çил кайать,
Выçӑ кашкӑр пек улать.

Çиçӗм пӗрмай çуттипе
Вӑрман ӑшне çутатать.
Тӗттӗм вӑрман ӑшӗпе
Пӗр лашапах иксӗмӗр

Кунта çитсе ӳкрӗмӗр.
Питӗ хытӑ ҫуптарса,
Лаша çитсӗ ывӑнса
Ӑна кунта сывлатса
Хамӑр канса ларар-ха.

**Нарспи**— Выртса кап-ха савнă ҫун,
Ҫӳлĕ йуман айĕнҫе
Есĕ тутлă каннă ҫух
Хамах ларăп астуса.

**Сетнер**— Асту, Нарспи, ан хăра!

**Нарспи**— Савни пĕрле кулсассăн
Нимĕнрен те хăрамăп.
(С е т н е р ҫ ы в ă р с а к а й а т)
Сетнер пуҫĕ вĕҫĕнҫе
Енĕ ларап тĕлĕрсе
Те тĕлĕкре, те ҫăнах—
Атте йытă пулнă та
Шăлĕсемпе шаккаса
Сиксе ҫӳрет вăрманта.
Ăҫта тартăн, усал хĕр?
Пуҫна ҫийĕн тупăнсан!
Йытă ури айĕнҫе
Шатăртатат сĕм вăрман.

Ҫывăх-ҫывăх, ак ҫитет.
Вăранатăп та куратăп:
Пирĕн йуман патиелле
Виҫ йуланат ҫывхарат.

Сетнер, Сетнер! тытрĕҫ-ҫке!
Тăр, тăр! тарса хăтăлар!

Ай пӗтрӗмӗр, пӗтрӗмӗр—
Ӑҫта тарса пытанар!

6-мӗш курӑнни.

(Нарспи калаҫнӑ вӑхӑтра вӑрманта виҫҫӗн йӗрлесе шыраса ҫӳреҫҫӗ. Йулашкинђен пырса тупса тытаҫҫӗ те ҫыхса илсе кайаҫҫӗ иккӗшне те).

*(Ђаршав).*

## III-мӗш стсенӑ.

Михетер ҫуртӗнђе.

7-мӗш курӑнни.

(Сетнерпеле Нарспийе тытса килђӗс вӑрмантан)

**Карђӑк—** (Сиксе тухрӗ те ҫӳҫрен йаврӗ Нарспине).

Ах, ӑнман хӗри-праҫ
Мӗр хытланса ҫӳрерӗн?

**Нарспи—** Ей аннеҫем аннеҫем
Мана ҫӳҫрен ан сӗтӗр,

Мана апла вĕрентсе
Манран ыră ан кĕтĕр.

**Михетер**— (Ђупса тухрĕ те, ђышкă пађĕ Сетнере).

Ай памăссăр, йыта пиђ!
Пуйан хĕрне хапсăнан.

**Сетнер**— Ей Михетер, асатте,
Хĕненипе усси çук,
Есĕ мана хĕнесе
Кĕлрен вутă тăвас çук!

(Михетер саламат тытса çыхса хунă Сетнере хĕнет; çынсем туй пек пăхаççĕ).

**Сетнер амăшĕ**—(йĕрсе) Ах мăнтарăн ывăлăм!

(Икĕ çын ăнсăр Сетнере илсе тухса кайаççĕ).

**Карђăк**—(Нарспине) Ех пархатарсăр!
Йал култармăш, ăш хыппи!
Питна куçна çу ђасрах,
Йусан ĕнтĕ хăвăртрах!

(Татах пĕркенђĕкпе витеççĕ)

**Йершди**— Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк,
Атăр шепрех туй тăвар!
Андах хаlхи ĕç çиндĕн
Çĕн кĕрĕве калас мар!
Акă туй та çакă туй
Пысăк туй та, пăсăк туй!

(Каллех йурла пуçлаççĕ, шăпăр, купăс калаççĕ, ташлаççĕ).

8-мĕш курăнни.

(Çавваххăтра çĕнĕ кĕрӳ Тăхтаман хăйĕн туй йышĕсемпе çĕмĕрĕлсе пырса кĕрет. Хăй хура сăхман, пар çĕлĕк, шур дăлха тăхăннă тенкĕсем çакнă).

**Нарспи**— (Ват кадтине курсан хурлапса).
Ей аттеçĕм, аннеçĕм,
Мĕшĕн çирĕр хĕр пуçне,
Мĕншĕн патăр хĕрĕре
Çидĕ йутăн аллине

Ей кадтăмçăм, Тăхтаман,
Манпа ырă курас çук
Епĕ, дунăм пĕтсен те,
Санпа пĕрле пулас çук.

**Кĕçĕн кĕрÿ**—Уçатăр-и, уçмастăр-и?
Кÿртетĕр-и, кÿртместĕр-и? *)

**Михетер**— Калăр, кĕçĕр, хулăнне тÿленĕ кĕме йурать.

**Карçăк**— (Сăрапа тухса) Лашăр çынçен
анăр та, пÿрте кĕрĕр, хăна пулăр!

**Мăн-кĕрÿ**— Тав сире ыр хуçасем!
Сыв-и çÿретĕр-и?
Пире хапăл тăватăр-и?

Епир инçерен килнĕ хуçасем
Тавар шыраса çÿретпĕр.
Кунта сирĕн лайăх тавар
Пур тенине илтсеттĕмĕр.
Çиç хир урлă килтĕмĕр,
Çиç çырмаран касрăмăр
Хапăл тăватр-и, тумастр-и?
Сирĕн тавар, пирĕн укçа.
Калаçса пăхсан килĕшĕпĕр.

**Михетер**— Иртĕр мала ыр çынсем,
Йепле хапăл тăвас мар,
Ларăр сĕтел хушшине.

---

*) Хушса çырни çине пăх (Кĕнеке хыçĕнче)

**Мăн-кĕрÿ—** Ҫыс тунăшăн тав сире!
Акă сире тăхлаҫсем,
Хушăлкари куҫҫенеҫ!

(Такмакпа куҫҫенеҫсем карҫăка тыттарат). (Туй ҫынисене сĕтел хушшине лартса сăра тыттараҫҫĕ, ĕҫеҫҫĕ, ҫийеҫҫĕ, йурлаҫҫĕ, ташлаҫҫĕ.)

**Мăн-кĕрÿ—** Ей туй халăх итлĕр-ха,
Хушăлкари хăтасем,
Кунти туйа турăмăр
Айтăр киле тапранар.

**Йевҫи—** Ан васкăр-ха хăтасем,
Тепĕр киле кайар-ха.
Халех киле кайиҫҫен
Туйа шепрех тăвар-ха!

(Татах ĕҫеҫҫĕ, йурлаҫҫĕ) Нарспине апат ҫитерсен сурпан сырăнтараҫҫĕ, хушпу тăхăнтараҫҫĕ. Хĕр йапалисене, ҫÿпҫисене туртаҫҫĕ. Михетерпе карҫăкĕ сĕтел пуҫне лараҫҫĕ. Нарспипе кĕрÿшĕ ҫăркуҫланса лараҫҫĕ.)

**Михетер—** Пехиҫ сире аҫамсем,
Пĕр пĕрипе тÿр пурнăр.
Телей пултăр ĕмĕре,

Сыв пул хӗрӗм, ан макăр.

(Пехиллесе пӗтерсен туйӗ кайрӗ хускалса. Сетнер те ҫирлӗ куҫӗсемпе Нарспине ăсатать, лешӗ ҫаврăнса пăхса йӗрсе утать.)

9-мӗш куранни.

**Сетнер**— Ех, пурăнăҫ, пурăнăҫ!
Вилме анҫах йулҫӗ ҫав.
Ех пурăнăҫ, Нарспи те
Ҫиҫӗ йута кайрӗ ҫав.
Унсăр пуҫне мӗн тăвас
Ăрăскалсăр пуҫăмпа!
Ăҫта кайса кӗрес-ха
Хамăн усал хуйхăмпа?

(Сетнерпе амăшӗ тухса кайаҫҫӗ). Шăнкăрав сасси, лашасен сасси.

*(Ҫаршав).*

## Виççĕмĕш пайĕ.

### Хушăлкара.

### 1-мĕш стсенă

1-мĕш курăнни.

**Хăйматлăх**-- Хушăлкара туй иккен,
Туйĕ ытла шеп иккен.
Шур сухаллă Тăхтаман
Туйпа çитет, çав иккен.
Ӗ̌ипер каҫҫă Тăхтаман
Силпи хĕрне çаклатнă.
Çав тер аван мăшăра
Урăм-сурăм туй лартнă
Туй тăваççĕ ташласа
Çамрăк пуса каҫҫисем
Туй йуррисем йурласа
Ывăнаççĕ çăварсем
Ӗнер Силпи йалĕнҫен
Туйĕ килҫĕ таврăнса.
Пайан кĕрӳ хĕр туйне
Кĕтет хĕрӳ туй туса.
Пайан хĕр-туйĕ килсен,
Каçпа хĕве хупмалла.

Ыран ирех тӑмалла,
Хӗртен арӑм тумалла.
Шӑнкӑр-шӑнкӑр шӑпкӑрав
Шӑнкӑртатать ҫулпала:
Хӗр-туй килет ҫӗмӗрсе
Урам тӑрӑх йалпала.
Вунӑ арӑм хушнупа
Сӑрап кӳме ҫийӗнчe,
Хӗрӗх виҫӗ урапа
Сӑрап кӳме хыҫӗнчe.
Ҫичӗ ҫӗрте урамра
Чарӑнчӗҫ туй ҫыннисем:
Хирӗҫ тухрӗҫ сӑрапа
Хушӑлкари тантӑшсем.

2-мӗш курӑнни.

(Мӑн-кӗрӳ ҫӗнӗ кипе ҫӗклесе кӗрсе сарнӑ кӗҫҫе ҫине тӑратать. Хӑйматлӑх Тӑхтаманна Нарспине ҫӑкӑр илсе пиллет. Унтан маларах иртеҫҫӗ те ҫӗнӗ мӑшӑра сӑра стакканӗсем тыттараҫҫӗ. Икӗ хут ӗҫсен, виҫҫӗмӗшӗнче тав-туса ӗҫеҫҫӗ.)

**Тӑхтаман**— „Нарспи, арӑм, тав сана!
**Хӑйматлӑх**— Ӗҫсем-пулса ҫитрӗҫ!

(Пӳркенчӗкне сӳсе илсе хӗрсем ҫине пӑрахать).

Пиртен тухнӑ йӑла мар,
Йуратупа телейлӗ
Ӗмӗр пурнса ирттерӗр
Иккӗн виртса виççӗн тӑрӑр
Ырӑ аҫа-пӑҫалӑ пулӑр.

(Нарспи çиленсе тӳртен тӑрат).

Ыталаса ҫуп тӑвӑр!

**Тӑхтаман**— Асту, Нарспи, йӗвенӳ
Ман алӑра малашне.
Туйна анҫах ӑсатам
Унта мана пӗлӗнçке
Мӗн пуласне пӗлме çук,
Ху курасне курӑнçке!

**Нарспи**— Санна ырах курас çук.

**Тӑхтаман**— Сӑйла, Нарспи, ханасе!

(Нарсни сӑра витрине сӗтел çине хыттӑн лартса пусне ҫикет, ӗçтереççӗ, йурлаççӗ).

**Тӑхтаман**— Ан ӳпкелӗр хӑтасем,
Сийӑм питех нумай мар
Ӗçер-çийер, тӑвансем,
Ӗмӗр пӗрле пурӑнар!

**Хӑтисенҫен пӗри**—Ей кӗрӳçӗм Тӑхтаман,

Сана ӳпкев ҫук пиртен
Пирӗн хӗре хытӑ пӑх
Тату пулӑр вилиҫҫен.

(Ура ҫине тӑраҫҫӗ.)

Атӑр кайар ҫулпала
Курка тулли пылпала.

(Тухса кайаҫҫӗ, шӑнкӑрав сасси).

Ей тавси, тавси хӑтасем,
Епир туйра пултӑмӑр
Нарспи хӗре леҫрӗмӗр!

(Ҫаршав).

---

Тӑхтаман пӳрҫӗ.

2-мӗш стсенӑ.

3-мӗш курӑнни.

Тӑхтаманпа Нарспи.

Тӑхтаман— Арӑм, апат хатӗрле!

Мӗншӗн йалан сив куҫпа
Калла малла пӑхатӑн?
Туй кӗлетне мантӑн-им?
Асту, йӗвенӳ хам алра
Епӗ сана тыткалӑп,
Саламат та пӑтарах
Хам йеплине кӑтартӑп.

**Нарспи**— Йурӗ, шыва кайса килем-ха.
(Витре илсе кайат).

4-мӗш курӑнни.

(Тӑхтаман патне пӗр ҫын пырса кӗрет)

**Ҫул-ҫӳрен**— Сывӑ-и-ха ыр хуҫа.
**Тӑхтаман**— Иртех,—есӗ ӑҫталли?
**Ҫул-ҫӳрен**— Силпи йенҫен килнӗ ҫын...
**Тӑхтаман**— Апла епир хурӑнташлӑ,
Ман арӑм та Силпирен...

**Ҫул-ҫӳрен**— Е, ьӗлетӗп, пӗлмесӗр
Михетер хӗрне, Нарспине...
Ырӑ кӗрӳ Тӑхтаман,
Есӗ мана ан ҫилен

Санран сӑмах пытармасп
Сана пынӑ сар Нарспи

Туйне пăрахса Сетнерпе
Вăрман тăрăх çӳренĕ
Есĕ ăна илтнĕ пуль,
Йеппле ĕçне пĕлен пуль.

**Тамăхтан**— Ак еп ăна тыткалăп,
Саламатпа çунтарăп...

(Нарсин шыв ăсса кĕрет).

Нарсин, инçе çĕрти хăна пур,
Сăра ăсса кил часрах.
Çăмарта пĕçер, чăкăт ларт
Лайăх хыпар кӳчĕ вăл.

(Нарсин хатĕрлет, хăй чĕнмест ĕçеççĕ).

**Çул-çӳрен**— Тавта—пуç, сыв—пулăр!
Манăн тухса утас пуль.

**Тăхтаман**— Чипер кай, сывă пул, (ăсатат).

(Нарсин йеннелле).

Есĕ апла хĕр иккен,
Есĕ апла Сетнерпе
Тарнă мĕн-ха вăрмана
Туйна тунă çĕртенех.

(Саламатпе илсе хĕнет ге, тухат).

5-мӗш курӑнни.

Нарспи йӗрсе ларнӑ ҫӗре пӗр арӑм пырса кӗрет.

**Нарспи—**

Арӑм пултӑм ирӗскӗр
Атте-анне хушнипе
Анҫах хӗрӗр мӗскӗнӗр
Ырӑ курмаҫт кайҫиме,

Хӗрхенмесӗр хӗрӗре
Ҫиҫӗ йутӑн аллине,
Ҫиҫӗ йута,-йут ҫӗре
Парса йатӑр мӗскӗне

Халӗ хӗрӗр мӗскӗнӗр
Асап курса пурӑнаҫ.
Ӑна ватӑ упӑшки
Йытӑ ырӑнне хураҫ.

Мӗншӗн мана савнинҫен
Ҫаплах йатӑр уйӑрса?
Мӗншӗн кунта килиҫҫен,
Ҫимерӗм-ши хам пуҫа?

Мӗншӗн хайар тӑшманпа
Ман пӗр ҫуртра пурӑнас?
Пӗтес мар-ши пуҫӑмпа?
Йепле тӳссе пурӑнас!?

**Арăм—** Ех мăнтарăн Нарспи кин!
Ҫеркке пекех куҫусем
Йĕре-йĕрех пĕтерен
Каллех сана Тăхтаман
Хĕнери мĕн тур курман?

**Нарспи—** Каҫҫа паҫĕҫ ирĕксĕр
Пулмарĕ-ҫке ырлăха.
Атте-анне ăссăрри
Ырлăха мар, хурлăха.
Каҫҫа паҫĕҫ ирĕксĕр—
Савăнăҫ ҫук ку тĕнҫен
Атте-анне ăссăртан
Савни йулҫĕ пĕр пĕҫҫен.
Каҫҫа паҫĕҫ ирĕксĕр—
Йатăм ҫĕрҫĕ тахҫанах.
Атте-анне ăссартан
Пулҫĕ асапăм анҫах.
Атте-анне ăссăрри
Ырлăха мар, хурлăха...

6-мĕш курăнни.

(Сентти килет сиктерсе, кĕвентине утланса, хулăпа лашине ҫаптарса. Ăнсăртранах инкĕшне, тапса илет урипе).

**Сентти—** Инке, тулта пит аван,—

Лаша кĕтме кайатăп,
Тăри çăмарти шыратăп,
Тупсан сапа кăтартăп.
Айта инке вăрмана
Хура çырла пуçтарма.
Хура çырла пыл пекех,
Пирĕн инке ҫун пекех.

**Нарспи—** Сентти, есĕ çитрĕн-и?

(Сентти аҫана ыталаса ҫуп-тăват).

Çав тер ырă аҫана
Тура ҫунне панă çав,
Кулса сикке выҫама
Кайăк ҫунĕ йанă çав.
Çиҫĕ çулхи аҫара
Ҫăваш ҫунĕ ларат çав.
Хăйĕн пĕҫĕк ҫĕлхипе
Шĕкĕлтетет инкĕшпе (йĕрет).

**Сентти—** Ан йĕр инкем, ан йĕрсем,
Тутăрупа шăл куçна.
Ан хуйхăрсам ичкеçĕм,
Хăваласам хуйхăна.

**Арăм—** Йурĕ, Сентти, вĕçтерех,
Кайах, аҫам, выҫама.

(Сентти кĕвентипе сиктерсе тухса кайат).

Çапла ĕнтĕ, Нарспи кин
Хĕр-арăмăн телейĕ.
Атте-анне хăй хĕрне
Йуратса çеç ӳстерет.

Хĕртен арăм пулсассăн
Ват упăшка кӳлешет
Тупрĕ пуйан упăшка
Аçу-аҥҫу хăй хĕрне,

Анҫах унта мĕн усси—
Йуратмасан пĕр-пĕрне?
Тату, ырă, милĕшее
Иккĕш пĕрле пурăнсан
Çĕр хут ытла телейлĕ
Йурлă çын та пуйанран...

Хĕне, хĕне Тăхтаман,
Хурсам йытă вырăнне!
Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Сапран çамрăк ан кутăр.

Асаплантар Тăхтаман,
Нарспи ҫасрах ватăлтăр!
Анҫах кайран хăвăнах
Укĕнмелле ан пултăр!

(Т у х с а  к а й а т).

**Нарспи**—(п ӗ т ҫ е н е х).

Укӗнмелле пулӗ те,
Анҫах кайран пулӗ-ҫав!

Манăн савни Сетнер пур—
Ҫăлаймӗ-шим вăл мана?
Унăн вăйлă аллисем
Пӗтермӗҫ-шим тăшмана?

Ҫук, пуҫăма ҫийиҫҫен
Тăшманăма пӗтерем,
Асапланса тўсиҫҫен
Тăхтамана... вӗлерем,
Анҫах вăйăм ҫитӗ-ши?!
Йепле кунтан хăтăлас?
Ей пўлӗхҫӗм пулăшсам!
Ҫунăм ҫунат мӗн тăвас?...

Пӗтсен пӗтем, пӗт тăшман—
Пурăнăҫăм ырах мар.

(Х у р а н ҫ и н е х у т п а ҫ ӗ р к е н и н е й а р с а).

Наркăмăшăм, ес пайан
Хăвăн ӗҫне туса пар!

(Х у р а н н е ҫ а к с а в у т ҫ ӗ р т с е, й а ш к и н е в ӗ р с е-с у р с а п ă т р а т а т).

„Çитмĕл тинĕс леш йенҫен
Килет карҫăк Шапатан
Вĕр, сур, карҫăк йашкана—
Пĕттĕр усал Тăхтаман!
Утмăл тинĕс уттинҫе
Ларать, сикет йĕс пукан,—
Сикех, сикех йĕс пукан,—
Пĕттĕр усал Тăхтаман!
Вăтăр та пĕр ту çинҫе
Йĕс хуранра пиç йашка,
Çав йашкара пиç çĕлен,
Пиç тамăкра упăшка!“

7-мĕш курăнни.

(Хиртен Тăхтаман таврăнҫĕ, Нарспи сĕтел çине йашкине антарса лартать).

**Тăхтаман—** Епĕ хирте çӳресе
Пайан питĕ ĕшĕнтĕм.

(Ларса сыпса пăхса, ҫăмăрне кăтăртса).

Йашка тутлăçке пайан,
Йашка тутлă, çи ларса!

**Нарспи—** Çийĕпçке-ха кайран та,
Пит çийессĕмех килмест.

(Нарспи пĕр йенелле пăхса çур
çасăпа).

Сийех, çийех Тăхтаман
Наркăмăшлă йашкана
Йĕнтĕ есĕ малашне
Упăшка мар арăмна.

(Тулалла тухса кайат, Тăхтаман
çисен, çисен шыв ĕçет).

**Тăхтаман**— Нарспи, ђасрах кĕр пўрте!
Айхă килет, вырăн сар!
Ака турăм ĕшĕнтĕм
Ăшăм çунат çавтерех.
Йашка хыççăн шыв ĕçрĕм;
Туйăнђĕ ерех пекех.

**Нарспи**— (Йеррипе пăхкаласа кĕрет,
упăшки хырăмне йăваласа ура-
йĕнђе авкаланса ларат).

Пĕтрĕн ĕнтĕ Тăхтаман,
Çутă тĕнђе санăн мар!...

(Вырăн сарса çĕклесе вырттарат
Çĕкле, çĕкле çапсан, Тăхтаман виђет).

Пĕтрĕ пĕр ђун тĕнђере,
Ĕçĕсемшĕн хупланђĕ
Пĕтрĕ ђăваш ĕмĕрĕ,
Унăн ђĕри лăпланђĕ.

Вырăн çинҫен тăрас çук,
Выçă вылҫăх-ҫĕрлĕхне
Тăрса апат парас çук
Выçă ака лашисем
Кĕçенеççĕ картара,
Анҫах есир тăлăхсем
Курассăр-çук хуçăра!

Йал вĕçĕнҫе сĕм вăрман
Ҫăшăлтатат çӳлçипе.
Хушка çăлтăр вылҫатат,
Çӳл тӳпере çуттипе.
Хушăлкари ҫăвашсем
Çывăраççĕ харлатса.
Апкартинҫи тăмана
Анҫах вĕçет ухлатса
Уйăх кукри йаранса
Тухрĕ вăрман хыçĕнҫен.
Шăппăн—шăппăн çеç утса
Тухса тарам çак пӳртрен!

(Нарспи тухса кайат).

(*Ҫаршав*).

## Тӑваттӑмӗш пайӗ.

### *Кайран пулнӑ ӗҫсем.*

### I-мӗш отсенӑ.

(Вӑрманта, йывӑҫсем хушшинҗе Нарспи утса пырать. Отсенӑ хыҫӗнҗе инҫетре Сетнер сасси илтӗнет.)

**Сетнер**— Шавлать, кашлать сӗм вӑрман,
Вӗҫӗ-хӗрри курӑнмасть.
Кутсӑр, пуҫсӑр ҫил тухсан.
Ҫарӑвассӑн туйӑнмасть.
Шавлать, кашлать сӗм вӑрман,
Тамӑкри пек ахӑрать.
Те арҫури, те шуйттан,
Ҫав терийех ашкӑнать.
Аҫа ҫапать, шартлатать,
Пӗтӗм тӗнҗе кисренет.
Ҫумӑр ҫырма пек йухать
Ҫупашкасенҗе кӗрлет.

**Нарспи**— Сӗм-сӗм вӑрман, сӗм вӑрман,
Мӗншӗн хытӑ шавлатӑн?
Мӗншӗн шӑй-шай шӑхӑрса
Мӗскӗн ҫуна хӑрататӑн?

**Сетнер** — Сĕм, сĕм вăрман, сĕм вăрман.
Ман хуйхăма итле-ха:
Çуралтăм мĕн аннерен
Хĕн-хур, асап курма-çеç.

Çав асапран, хĕнлĕхрен
Çамрăк пуçăм пĕтни-çеç
Çамрăк пуçăм пĕтмĕ-џĕ,
Мулăм çукки пĕтерџĕ.

Вăл та пулин йурĕ-џĕ
Çын ухмаххи пĕтерџĕ,
Çын ухмаххи йурĕ-џĕ,
Усал тăшман тупăнџĕ.

Усал тăшман пĕтĕ-џĕ,
Турă çырни курăнџĕ.
Ман йурăри куç-çулсем
Пĕр џун патпе çитин-џĕ.

**Нарспи** (и т л е с е) Ах, турăçăм, пÿлĕхçĕм,
Ырă турă çырлахсам!
Хура вăрман ăшĕнџе
Савни сасси илтĕнџĕ.

**Сетнер** (к ĕ р е т) Сĕм, сĕм вăрман, сĕм вăрман...
Нарспи, Нарспи, есĕ-им?!

**Нарспи** (и т а л а ш с а) Сетнер, Сетнер, ах џунăм,
Йепле мана тĕл пултăн?

**Сетнер** — Сан тăшмана пĕтерме
Епĕ çула тухсаттăм.
Анҫах сана тĕл пулсан,
Икĕ савни пĕрлешсен,
Пуçне тайрĕ ват йуман.
Пĕр-ик тапхăр çил вĕрсен,
Шăп лăпланҫĕ сĕм вăрман.
Хура пĕлĕт саланса
Пĕтрĕ вăрман хыçĕнҫе.
Хĕвел пăхать шăратса,
Кайăк йурлать йăвинҫе.
Курăк çинҫи сывлăма
Хĕвел парать ăшшине.
Икĕ ҫуна савăшма
Хĕвел парать çуттине.
Йăлтăртатать ырă кун,
Усал кунăн мĕн ĕç пур?
Савăнатпăр икĕ ҫун,
Çиҫĕ йутăп мĕн ĕç пур?

**Нарспи** — Ах, çут тĕнҫе пит аван,
Ĕмĕр пĕрле пурнасҫĕ.
Анҫах вăрман ăшĕнҫе
Хура кайăк ҫăйлатать:
Ай, Тăхтаман, Тăхтаман,
Ман ҫунăма шырать-çке.

(*Ҫаршав*)

## 2-мĕш стсенă

Сетнерпе Нарспи нĕҫĕк пӳртре савăнса калаҫса апатланса лараҫҫĕ.

**Сетнер**— Анне, турăх туп-ха кӳрĕшреп.

**Амăшĕ**— Йурĕ мĕскĕн аҫамсем,
Халех илсе килетĕп
Ҫăкăр касăр униҫҫен.

(Пăлтăрта сасартăк ура сасси илтĕнет, алăка шаккаҫҫĕ. Михетерпе карҫăкĕ пыҫĕҫ кĕҫĕҫ алăкран.)

**Карҫăк**— Пирĕн Нарспи ку пӳртре
Ҫук-ши тесе килтĕмĕр.
Йалти ырă ҫынсенҫен
Кунта тесе илтрĕмĕр.

**Михетер**— Ех хĕр, хĕ-ĕр, хĕри ес!
Нарспи, мĕскер хăтлантăн?
Йепле ҫынсем умĕнҫе
Ҫак намăса кăтартрăн?

Мĕн ҫитмерĕ-ши сана
Мĕн ҫитмерĕ тăнҫĕре?
Мĕншĕн, хĕрĕм, мĕн пуртан
Йуратăтăн Сетнере?

Пуйан хӗрӗ пуҫупа
Мӗншӗн ҫапла хӑтлантӑн?
Ӗмӗр курман намӑса
Ват пуҫӑма кӑтартрӑн?!

**Карҫӑк—** Мӗн ҫитмен-ши ухмаха,
Упӑшкине вӗлерме,
Ҫак Сетнерпе вӑрманта
Лапӑштатса ҫӳреме?

**Михетер—** Турра шӗкӗр,-халиҫҫен
Усал сӑмах илтмен-ҫӗ,
Ҫак тарана ҫитиҫҫен
Киремет те тивмен-ҫӗ.

Манӑн килӗм-ҫуртӑма,
Ырӑ пирӗшти пӑхать-ҫӗ.
Ырӑ пирӗшти пӑхнипе
Йалта йатӑм кайман-ҫӗ.

Пӳлӗх, хӑрпан, сут-тӗпҫе
Мана савса тӑрать-ҫӗҫ.
Кӑвак-хуппи, сут-хӗвел,
Мана тупӑш парать-ҫӗҫ.

Ҫак тарана ҫитрӗм те,
Ватӑ пуҫӑм усӑнҫӗ.
Есӗ ҫапла пулнипе
Ырӑ кунӑм пӑсӑлҫӗ....

**Карҫӑк** (Михетере) Вӑрҫах ӗнтӗ хытӑрах,
Пӑсӑрлантар Сетнерне:
Ӗҫре хытнӑ аллипе
Ан хапсӑнтӑр ҫын хӗрне!

**Михетер**— Мӗн кӗҫӗнрен ӳстертӗм,
Хӗр кӑмӑлне татмарӑм.
Савнӑ хӗршӗн пуйанлӑх
Кунӗн ҫӗрӗн пуҫтартӑм.

Кӑнтӑрла та ҫӗрле те
Канлӗ ыйхӑ курмарӑм,
Хӗрӗмшӗнех тӑрӑшса
Куҫӑмсене хупмарӑм.

Йепле каҫҫа парӑп-ши,
Тесе йалан шутларӑм.
Хӗр телейшӗн тӑрӑшса
Пуйан каҫҫӑ шырарӑм.

Каҫҫа патӑм туй турӑм,
Пайан акӑ мӗн ҫитрӗ.
Манӑн ватӑ пуҫӑма
Пайан акӑ мӗн ҫирӗ.

**Карҫӑк**— Шеллеместӗн аннӳне,
Ах, ҫӗр ҫӑтманӑ пуҫна!
Камӑн хӗрӗ пултӑн-ши,
Кам ӳстертӗ-ши сана?

**Михетер**— Мён кёçёнрен ÿстертём
Пытне пăхса савăнма.
Çак тарана çитрём те,
Хёрём çирё пуçăма.

Аçу—аннÿ ирёкё
Пулçё çёрё вырăнне
Пёр Сетнерпён тăктартăн
Аçу—аннÿн шур çÿçне.

Пулăшмарё пуйанлăх,
Пулăшмарё сăмах та.
Пуйан каççă çумёнçе
Апла мулмё ухмах та.

**Нарспи**— Ей, аттеçём, çамрăк çун
Мёншён патăр хёрёре?
Пуйанлăхра анçах мар
Ыр курасси çыннинçе...

**Амăшё**— Йе,—йе, усал, ытлашши
Ан кар ёнтё çăварна.
Аннÿн ăшне çунтартăн,
Турăран килешшё пуçна!

**Михетер**— Çак намăса кăтартрăн,—
Йалти çынсем мён калёç?
Хёрне ан мал ват сунна!—
Аçу сине кăтартёç.

Анҫах йалти ҫăварсем
Кирек те мĕн калаҫҫăр,
Йату ҫĕрнĕ пулсан та,
Ҫанах эсĕ манăн хĕр.

Атта, хĕрĕм, таврăнар
Шăтăк шатăк ку пӳртрен.
Тепĕр каҫҫă тупăпăр
Йату ҫĕрсех кайиҫҫен.

Атта, Нарспи ан хуйхăр:
Санăн аҫу пур вĕт-ха
Йату пĕтнĕ пулсан та,
Аҫун мулĕ пур вĕт-ха.

**Карҫăк**— Атта, йытă, хăзăртрах,
Пĕртре мана пăхмастăн.
Сетнер, йытă, кĕҫҫе пит,
Пуйан хĕрне ан хапсăн.

**Нарспи**— Ей аттеҫĕм, аттеҫĕм,
Мĕншĕн мана ҫийетĕн?
Намăс кӳнĕ хĕрĕре
Хăвăн патна ҫĕнетĕн?...

**Карҫăк**— Ав, тата мĕн калаҫат!
Савнă хĕрне итле-ха!

**Михетер**— Ҫитĕ, карҫăк вуҫашма,
Хĕр сăмахне итлер-ха.

**Нарспи** — Арăм пулнă пуçăмна
Киле пырса тăрăп-ши?
Савман качча кайсассăн,
Татах асап çăтăп-ши?

Çук, çук, атте, ан çĕн те:
Хаçă тин киле пыраймăп,
Çапла пулса пĕтсен тин,
Каççă кĕтсе лараймăп.

Есир мана ӳстертĕр,
Аçа çухне йуратрăр,
Анçах ӳссе çитрĕм те,
Хĕрĕр çунне курмарăр.

Енĕ сире кĕл-турăм;
Енĕ сире йăлăнтăм.
Вĕçне çите пуçласан,
Йăвалланса макăртăм.

Анçах есир хĕрĕре
Ӳстерессе ӳстертĕр.
Ӳстертĕр те, укçашăн
Сутса йарса пĕтертĕр.
Аçа çухне хĕрĕре
Йурататпăр теттĕр-çĕ,
Савнă хĕрĕр мĕн ытнă
Ăна пурте хатĕр-çĕ.

Уссе çитрĕм, аттене
Пĕр çул кĕт-ха терĕм те,
Атте вăрçса пĕтерҫĕ,
Анне çӳçрен сĕтĕрҫĕ.

Мĕншĕн манăн кăмăла,
Çав йулашки кăмăла,
Тумарăн-ши аттеçĕм?
Хаҫ пулмăттăм каплалла.

Мĕншĕн çапла ху хĕрне
Парса йатăн кашкăра?—
Саншăн çав пур ырăлăх
Мĕн пурĕ те укçара...

Епĕ асап курнишĕн
Ху айăплă, епĕ мар.
Сетнер кĕрӳ пулмасан
Епĕ сирĕн хĕрĕр мар.

Ей аттеçĕм, аннеçĕм,
Сетнерпеле пехиллĕр—
Çавăн ҫухне тин вара
Ĕмĕр пĕрле пулăпăр.

**Карҫăк**— Ав, ав хĕрӳ мĕн калать—
Сетнер, шуйттан, ылĕртнĕ,
И-и, Михетер, кайар-ха,
Хĕрӳ çине сур ĕнтĕ.

**Михетер** — Ы-ых, Сетпер, аставăн:
Манăн хĕрэ ес çирĕн!
Есĕ çав тер усал хĕр,
Хура пўртрех тин еппин!
Аçу килне ђим халĕ
Хăвах ђупса пырăн-ха.
Аçу мĕнле ыррипе
Çавăн ђухне курăн-ха.
Аťа, ватă карђăкăм,
Кайар ĕнтĕ килелле.
Ĕнтĕ сăмах пĕтрĕ пуђ,
Пайан пирĕн хĕрпеле.

**Карђăк** — Пĕтĕр, типĕр çакăнта,
Типĕр, хăрăк тураţ пек!
Шăммăр-шаккăр çĕриђђен
Асапланăр йытă пек —

(Т у х с а  к а й а ç ç ĕ).

*(Ђаршав).*

3-м ĕ ш  к у р ă н и и.

М и х е т е р  к и л - ç у р т ĕ н ђ е.
Х у ç п с е м,  т а р ç и с е м.

**Михетер** — Ах, карђăк, итле-ха:
Йумăç патне каймăн-ши?

Ăшăм-ђиккĕм çунипе
Кăçта пуçа ђикĕп-ши.

**Карђăк**— Пайан ĕнтĕ каç пулђĕ
Ĕçлесе те ывăнвă.
Нарспишĕн те хуйхăрса
Вăйăм-халăм йулмарĕ.
Кĕçĕр выртса çывăрсан
Ыран кайăп йумăçа.
Вăкăр пусса ђўклесен
Çăмăл пулмĕ-ши пуçа.

(Хуçнсем тĕпеле сарса выртаççĕ. Харлата пуçлаççĕ. Пĕр вăрă ђўређереп кĕрет те, тата иккĕшне алăк уçса кўртет. Пĕр вăрри çĕçĕ илсе Михетер патне пырса пуса пуçлать, 2-мĕшĕ тытса тăрать).

**Михетер**— Хурах! Распуй! Тарçăсем!
Килĕр-ха, çаратаççĕ! Вилен! Хурах!

(Сакă çинђен кĕмсĕртетсе персе анать).

**Карђăк**— Мĕн пулђĕ? Михетер! Кам упта?
Ах турăçăм, пўлĕхçĕм! Хурах!

**3-мĕш вăрри**— (Карђăка минтерĕпе хупласа)
Ан кăшкăр, тухатмăш!

**Карҫӑк**— (Минтер айӗнҫе). Распуй! Вӗлереҫҫӗ,
Ҫӑлӑрсам! Хуҫах!

**Сетнер**—(Сасартӑк ҫупса ҫитсе) Тытӑр! Вӑрӑсем! (Кӗрсе ҫапӑҫа пуҫлат). Ах! Пӗгрӗм! (тесе вӑрӑ пурти айӗнҫе йӑванса ӳкет. Вӑрӑсем йапалисене ҫӗклекелесе тухса тараҫҫӗ).

Сасӑсем: Мӗн пулнӑ?

**Тимӗркке**— (Ҫупса пырса).
Михетере ҫаратнӑ
Пӗр йапала хӑварман.
Ҫӗр ҫӑтманӑ вӑрӑсем
Турӑран та хӑраман!
Михетерпе карҫӑкне
Иккӗшне те вӗлернӗ!

Ҫиҫӗ тарҫӑ-тӗрҫине
Ерех парса ӳсӗртнӗ.
Сетнер ҫупса ҫитнӗ мӗн,
Илтсе карҫӑк сассине,
Вӑрӑ туйттан пурттине
Пуҫнех ҫурнӑ унӑнне.

**Нарспи**— (Ҫупса ситет те), Ах! (тесе аллисӗпе сарса хытса кайат. Унтан Сетнер виллине курса пуҫне тытса).

Ей аттеçĕм, аннеçĕм,
Мĕншĕн мана çуратрăр?
Тĕнҫе асапне курма
Кун çуттине кăтартрăр.

Ей турăçăм, пÿлĕхçĕм,
Мĕншĕн мана ҫун патăн?
Мĕскĕн çамрăк пуçăма
Пĕр телей те йамарăн.

Ей ҫукăмçем, çамрăк пуç,
Мĕншĕн капла пултăн-ши?
Пĕтĕм тĕнҫе хушшинҫе
Есĕ пултăн ытлашши.

Ман йулашки шанҫăкăм
Пĕтрĕ Сетнер пуçĕпе!
Вăçĕ вилĕ умĕнҫе
Йенле пĕҫҫен еп йулам?

Ăçтан тупам пĕр вĕрен?
Çут тĕнҫерен уйăрлам!

(*Ҫаршав*).

## Кайран каламалли. (Епилок).

Кăнтăрлапа пĕтĕм йал — пĕсçисене шăрт çанат).

Шыракансем таврӑнҫ҆ĕҫ
Нарспи виллине тупса.
Кӑнтӑр-варта йӗмраран
Вилнĕ терĕҫ ҫакӑнса.

Вара вилнĕ вырӑннех
Хуҫ҆ĕҫ ӑна пытарса.
Тӑпри тавра шĕшкĕрен
Ҫатан лартрĕҫ ҫавӑрса.

Хĕвел анҫ҆ĕ каҫ пулҫ҆ĕ,
Ҫ҆ӑваш ҫынни ҫывӑрат.
Хĕвел тухрĕ ҫутӑлҫ҆ĕ,
Ҫ҆ӑваш ĕҫе тытӑпат.

Анҫ҆ах пирĕн Нарспишĕн,
Ĕмĕрлĕхе каҫ пулҫ҆ĕ.
Ĕмĕр тĕттĕм тупӑкра
Хуйхи-суйхи татӑлҫ҆ĕ.

* * *

Ҫапла иртрĕ пурӑнӑҫ,
Пуҫĕ пĕтрĕ ҫӑмрӑклах
Ашшĕ-амӑш ухмахран
Пĕтрĕ хуйхӑ-суйхӑпах.

Курҫ҆ĕ ҫутӑ тĕнҫ҆ене
Пӳлĕх-турӑ пӳрнипе,
Ӳсрĕ пулҫ҆ĕ сарӑ хĕр
Атте-анне пӑхнипе.

Пӳлĕх-туррӑп кӑмӑлĕ
Ӑслӑ турĕ хӑй хĕрне.
Атте-анне ирĕкĕ
Ҫирĕ сарӑ хĕр пуҫне.
Выртрĕ хĕсĕк тупӑка,
Йаҫĕ йулҫĕ йал ҫинҫе.
Ун хурлӑхлӑ йуррисем
Йулҫĕҫ ҫынсен асĕнҫе.
Хаҫ те пулин Сиппире
Асӑнаҫҫĕ мĕскĕне.
Йалан, ҫумӑр пулмасан
Шыв сапаҫҫĕ тӑприне.

*(Ҫаршав).*

*Хуша ҫырни.*

**Такмак.**

Асӑнны ҫиҫĕ кун, тухни виҫĕ кун, утсем ырхан пулҫĕҫ, ҫулсем хура пулҫĕҫ: ҫитеймерĕмĕр вӑхӑта, айӑп тумасан йурĕҫĕ есир пире, тайӑп пуҫӑм сире (пурте пуҫҫапаҫҫĕ). Утмӑл ҫухрӑм хура вӑрман урлӑ килтĕмĕр, ҫитмĕл ҫухрӑм ҫеҫен хир урлӑ килтĕмĕр. Утмӑл ҫухрӑм хура вӑрман урлӑ каҫнӑ ҫухне пĕр пӑлан куртӑмӑр: упӑн мӑйраки вĕҫĕ ылттӑн иккен, ҫĕрии вĕҫĕ кĕмĕл иккен, мӑйра-

киле шăйăрат те йĕр тăват, ҫĕрнипе пусат те ҫул тăват. Ҫавăн ҫулĕпе килтĕмĕр. Ҫакă туй халăхĕ: айăп тумастра? Кĕтетре? Хапăл тăватра? тет.

**Тухса илекен** калат: „Кĕтетрĕр, хапăл тăватпăр", тет. **Леш калат:** „Ҫитмĕл ҫухрăм ҫеҫен хир урлă килнĕ ҫух куртăмăр епир ҫил-ҫунатлă урхамах. Унăн пуҫĕ пĕлĕте тив-мест, ури ҫĕре тив-мест; утни—йуртни сисĕнмест: шыв пек йухат, ҫил пек вĕҫет, ҫав урхамах ҫине утланса килтĕмĕр епир ҫак туйа. Ҫеҫен хир варринҫе ҫавра кўлĕ варринҫе илттăн йупа, ылттăн йупа тăрринҫе ăмăрт кайăк, увăн ури пăхăр, ҫунаҫĕ кĕмĕл, сăмси ылттăн; урипе тапат, ҫунаҫĕпе ҫупат, ҫăмсипе вăйă калат, ҫав вăйă сассипе килтĕмĕр епир. Ҫав ҫулпа килнĕ ҫухне ҫак хăгасен йалĕ курăнҫĕ хула пек, ҫурҫĕ умне ҫитрĕмĕр, ҫурҫĕ курăнҫĕ кантур пек: хапхи тăват йупаллă, виҫĕ хупăллă, ҫийĕ калай, йупи мерҫен, хуппи кĕлепҫе, тăпси пăхăр, тыткăҫи кĕмĕл, вăл хапха ҫил-хĕвелпе шăлтăртатат, хĕрў хĕвелпе йалтăртатат; ҫак хăта пире хапхине уҫса кĕтсе хапăл туса тăрат; вăл хапхаран кĕрсен, хăтанăн карташ пит пысăк иккен: урлăшĕ вăтăр утăм, тăрăшшĕ утмăл улăм, утмăл утăмра, утмăл йупа, кашни йупара утмăл упкă, утмăл уннăран пĕр ункине утсене кăкарса кантарма памĕши? епĕ ыйтмастăп, кĕрў ыйтат. Вĕҫсе пыракан ăмăрт кайăк та урттăш йыврăҫҫи ҫине ларса канат. Ҫак хăтанăн карташ

варринҫеултӑ хӑлаҫлӑ пӳрҫӗ пур: тултан пӑхсан сакӑр кӗтес, ӑшне кӗрсен тӑват кӗтес, тӑват кӗтессинҫен пӗр кӗтессине пирӗн ҫак туй халӑхне кӗрсе тӑма ирӗк пулмӗши? (Хӑта калать: пиртен ирӗк, тет). Вӑл пӳртӗн ӑшӗнҫе 99 хӑми пур иккен, 88 сакки пур иккен, 99 хӑминҫен пӗр хӑмине пире авалхи йӑлапа выҫаса кулма ирӗк пулмӗши? Ҫак хӑта пирӗн ҫак туй халӑхне кӗтсе сӑра тупӑ иккен; сӑрине ҫиҫӗ хут тупӑ, ҫиҫӗ хут туса, ҫиҫӗ пасмаран тупӑ. Нӳхрепре пиҫетлесе хунӑ пиҫӗке пур иккен, пиҫӗки хӗрӗх кӑшӑллӑ, икӗ пӑкӑллӑ тет; пӗр пӑккинҫен сим-пыл йухать, тепӗр пӑккинҫен тутлӑ шерпет йухать. Сим-пылне ӗҫсен ӳсӗр пулмалла, тутлӑ шерпетне ӗҫсен тутлӑ калаҫмалла. Вӑл ӗҫкӗ ӗҫпӗ ҫӗре ҫимӗҫ хатӗрленӗ: ҫиҫӗ ҫулхи вӑкӑрӗ пулнӑ, ҫиҫӗ ҫултанпа ҫиҫӗ кӗтӗве кӗмен, кӑҫалхи ҫул ҫав вӑкӑра пирӗн аҫа туйӗ хатӗрне тытса пуснӑ иккен. Унӑн иккӗмӗш ҫыса хатӗрленӗ пилӗк ҫулхи хура така пулнӑ; пилӗк ҫулта пиллӗк кӗтӗве кӗмен, вӑл пуҫӗпе те сӗкпӗ, куҫӗпе те сӗкпӗ, ҫав такана кӑҫалхи ҫул ҫак пирӗн аҫанӑн туйӗшӗн тытса пуснӑ. Тата виҫҫӗмӗш ҫыса хатӗрленӗ виҫӗ ҫулхи кӑркки пулнӑ, виҫӗ ҫулта виҫҫӗ ҫӗре анман, шав хуралтӑ тӑррипҫе шулап тӑрӑх ҫунатланса вӗҫсе ҫӳренӗ, ҫав кӑркканa турӑ хушнипе кӑҫалхи ҫул ҫил-тӑвӑл антарнӑ, хӑта ӑна ҫак туй халӑхӗшӗн тытса пусса пӗҫерсе хатӗрленӗ. Вӑл ӗҫкӗ-ҫике ҫисе-ӗҫсе тӑранни ҫӗре ҫак хӑтанӑн улма саҫӗ варринҫе мунҫа пур,

мунҫи урттӑш йывӑҫӗпҫен, ҫийӗ калай, лапки кӗленҫе, ҫулӗ мерҫен, ӑшши шерпет, милӗкӗ пурҫӑн, валашки пӑхӑр, курки кӗмӗл. Ҫак хӑта пур туй халӑхне ҫав мунҫапа кӳртсе ҫӑвӑнтараспӑн, тет. Ҫав мунҫаран тухнӑ ҫӗре, ҫак хӑта ҫыс хатӗрлет. Унӑн виҫӗ витре кӗрекен сӑмавар пур, вун-ик пуҫлӑ ҫӗлен пек ҫашкӑрса ларать. Сӑмавар таврашӗнҫе вун-икӗ парӑ ҫашкӑ ҫине ҫей тултарса хунӑ, ҫак туй халӑхне ларса ӗҫме хатӗрленӗ. Ҫак пирӗн хӑта лайӑх кӑмӑллӑ иккен, кам туйа килменнине, тепӗр хут шилӗк йыхӑрма йама крыҫтса умне ылттӑн ҫилхеллӗ, кӗмӗл улмаҫӑпӑр ут кӑкарса хунӑ иккен. Ей хӑта, тулҫӗ-и кӑмӑлӑр? Кунтан ытла сӑмахӑм ҫук, сиртен ытла савнӑ ҫыннӑм ҫук. Ҫитмен пулсан ҫитерӗр, ытла пулсан каҫарӑр. Ей хӑта, тав сана, тайма пуҫӑм (пуҫ-ҫапать): Тайма пуҫа хӗҫ витмен, ман сӑмахӑм сире витес ҫук. Тав сана, тайма пуҫӑм. (пуҫ-ҫапать).

**Хушса калани:** Театтӑрта выҫанӑ ҫух мӑн кӗрӳ ҫак такмака йе унти ҫӑвашсем туйра калакан урӑх такмака та каласа выҫама пултараҫҫӗ.